Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчене тухать

10 (7864) № * Шăмат кун, 2011 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 12-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ

## Кăмăллă, вашават

Район кунĕ умĕн



*Пурнăç сукмакĕнче пирĕнтен чылайăшĕ шăл юсаттарассипе, кăларттарассипе тата ларттарассипе тĕл пулать. Çак ыйтусемпе пыракансене Мăн Сĕнтĕрти 2-мĕш номерлĕ больницăн шăл юсамалли уйрăмĕнче яланах ăшă кăмăлпа кĕтсе илеççĕ. Тухтăрсем вашават калаçнинчен чирлĕ çыннăн хăрас туйăмĕ çухалать. Ку вара пулас сыватушăн çирĕп никĕс. Уйрăмра шăл кăларакансемпе тата юсакансемпе пĕрлех протезсем хатĕрлекенсем те малта пыракан технологисене алла илсе ĕçлесе пыраççĕ. Çакнашкал хастар ĕçченсенчен пĕри вăл – эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Людмила Николаевна Мироваева техник. Медицина училищи хыççăн вăл 30 çул çак ĕçре. Пĕтĕмпех Муркаш Ен сывлăхĕшĕн.*

*Ĕçне юратнăран хисепleççĕ ăна чирлисемпе больницăна пыракансем, ĕçтешĕсем.*

А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.

Ял тăрăхĕсенче профилактика кунĕсем пыраççĕ

## «Усал йăлапа ан туслашăр»

***Районта ял тăрăхĕсене тухса унти ĕç-хĕлпе паллашасси ырă йăлана кĕчĕ. Ĕçе çакăн пек йĕркелени халăх пурнăçĕпе тĕплĕнрех паллашма, хăйсене кăсăклантаракан ыйтусене сӳтсе явма май парать. Кĕçнерни кунхи черетлĕ профилактика кунĕ Оринин ял тăрăхĕнче пулса иртрĕ. Кунта район администрацийĕн тата районти шалти ĕçсен пайĕсен специалисчĕсем, хăй тытăмлăх органĕсен, социаллă сфера учрежденийĕсен ĕçченĕсем, ытти активлă çынсем пухăнчĕç. Чи малтанах вĕсем ушкăнсем çине пайланса ял тăрăхĕнчи пĕтĕмĕшле лару-тăрупа паллашрĕç, йывăр шăпаллă, ăнăçсăр çемьесенче пулса курчĕç. Профилактика кунĕн ĕçне Оринин шкулĕн залĕнче пĕтĕмлетрĕç, ларăва район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, культура тата архив ĕçĕсен пайĕн ертӳçи А.Е.Андреева ертсе пычĕ.***

– Кашни çын хăй вырăнĕнче ответлă пулмалла. Ашшĕ-амăшĕн ачапăчана мĕн пĕчĕкрен тĕрĕс воспитани парса ӳстермелле. Вĕсен пушă вăхăтне ахаль иртерме памалла мар, вĕсене кирлĕ ĕçе явăстарма тăрăшмалла. Йывăр çемьесене, çул çитмен çамрăксене вара куçран вĕçертмелле мар, вĕсене тĕрĕс çул çине тăма пулăшмаллах пирĕн, – терĕ район администрацийĕ çумĕнчи çул çитмен çамрăксене вĕсен прависене хӳтĕлекен комисси ертӳçи Алевтина Евстафьевна йĕркене пăсассинчен сыхланма ыйтса.

Оринин ял тăрăхĕ 14 яла пĕрлештерет, 2 пин ытла çын пурăнать. Йывăр шăпаллă 9 çемьене, 2 çамрăка учета илнĕ. Профилактика ĕçĕ вăхăтĕнче çул çинчи хăрушсăрлăх инспекцийĕн ĕçченĕсем транспорт хатĕрĕсене тĕрĕсленĕ, тĕрĕслев вăхăтĕнче 3 протокол çырма тивнĕ. Ку тăрăхра хĕç-пăшал упракан 19 çынна регистрациленĕ, вĕсен хуçисемпе калаçу иртернĕ.

Преступлени тăвассинчен сыхланма пулăшакан мероприятисенче милиции участокри уполномоченнăйĕ А.В.Прокопьев пысăк пулăшу парать.

– Пирĕн тĕп тĕллев обществăлла йĕркелĕхе упрасси, преступлени тăвассине сирсе ярасси пулса тăрать. Çул çитмен çамрăксем эрехсăрапа, пируспа, наркотикпа туслашассинчен асăрханмалла. Вĕсем пушă вăхăта ăçта иртернине аслисен пĕлмелле, – терĕ Александр Владимирович малашне те пĕр-пĕринпе ăнланса ĕçлессе шанса.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Пенси фондĕнчен

## Килĕшӳ тунă вăхăт пĕлтерĕшлех мар

**Январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ача амăшĕн капиталĕпе çурт-йĕр туянма илнĕ кредитсене саплаштарма усă курассипе çĕнĕ йĕркесем пурнăçа кĕчĕç. Ку енĕпе килĕшĕве хăçан туни пĕлтерĕшлех мар. Ун пирки 2010 çулхи декабрĕн 24-мĕшĕнче йышăннă «О дополнительных мерах государственной поддержки семей, имеющих детей» Федераллă саккунра каланă.**

Саккунпа пăхнă тăрăх малашне пурăнмалли çурт-йĕр кредитне е займне хăçан илнине тата ача миçе çултине пăхмасăрах ача амăшĕн капиталĕпе çурт-йĕр туянма илнĕ кредита саплаштарма усă курма май пур. Вăл шутра ипотекăпа илнисене те. Унчен вара правилăпа 2010 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен илнисене кăна саплаштарма май пулнă.

Районĕпе 2009–2010 çулсенче 143 çемье пурăнмалли çурт-йĕр кредичĕсене саплаштарма ача амăшĕн капиталне пĕтĕмпех е унăн пĕр пайне уйăрнă. Пĕтĕмĕшле сумма районĕпе 42,9 миллион тенкĕпе танлашать (республикипе 7 пин çемьене яхăн 2,2 миллиард тенкĕ).

Пенси фончĕ çавна аса илтерет. Ача амăшĕн капиталĕпе виçĕ тĕрлĕ усă курма май пур: çемьен çурт-йĕр условийĕсене лайăхлатма, ачасене вĕрентме тата ача амăшĕн пулас пенсине ӳстерме. Кунпа пĕрлех ача 3 çула çитни кирлĕ. Татах тепĕр май туса панă: ача амăшĕн капиталĕпе çурт-йĕр кредичĕсене саплаштарма май пур.

Ача амăшĕн капиталĕн виçине патшалăх çуллен индексацилет. 2011 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вăл 365 пин те 698,4 тенкĕпе танлашать.

## Юлашки тапхăр – февралĕн 15-мĕшĕ

**Çак кунран кая юлмасăр Чăваш Республикинче 21 пин ытла ĕç паракан отчетсене тăратса пĕтерме тивĕç.**

Малтан палăртнă тăрăх 2010 çулхи 4-мĕш кварталшăн страховани взносĕсем мĕн чухлĕ тӳлемелли тата тӳлени, харпăр хăйĕн страховани взносĕсем тата 2010 çулхи 2-мĕш çур çулшăн ĕçлекенсен стажĕ пирки сведенисене организацисен 60 проценчĕ ытла тăратнă. Вăл шутран çурри çак ĕçе электронлă майпа туса иртернĕ.

Отчетсене Пенси фончĕн управленийĕ ĕç паракана регистрациленĕ вырăна кура туса хатĕрленĕ графикпа килĕшӳллĕн «одно окно» режимпа йышăнать. Енчен те организацисенче 50 çын ытла пулсан вĕсем отчетсене электронлă майпа тăратма тивĕç.

Отчетсене вăхăтра тăратманшăн законодательствăпа килĕшӳллĕн штраф санкцийĕсем пăхса хунă.

**О. АЛЕКСЕЕВА,**
**РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пай пуçлăхĕ.**

Раççейре

## Халăхпа сӳтсе явмалла

РФ Президенчĕ Д.А. Медведев февралĕн 9-мĕшĕнче «Об общественном обсуждении проектов федеральных конституционных законов и федеральных законов» Указа алă пуснă. Унпа килĕшӳллĕн пĕлтерĕшлĕ федераллă саккунсен проекчĕсене малашне президент халăхпа сӳтсе явма сĕнет.

Саккун проектне хатĕрлекен патшалăх органĕсен документа халăхпа сӳтсе явма Интернета вырнаçтармалла. Гражданcемшĕн çапла майпа пулас саккунпа паллашма, хăйсен шухăшне пĕлтерме майсем уçăлаççĕ.

Пулас саккунсен проекчĕсене халăхпа сӳтсе явни вĕсене тивĕçлĕ шая çитерме тата йăнăшсенчен хăтăлма пулăшмалла.

Акă «Полици çинчен» саккун проектне сӳтсе явма граждансем йышлă хутшăнчĕç, пиншер сĕнӳ пачĕç. Çапла саккуна вуншар улшăну кĕртрĕç. Вăл мартăн 1-мĕшĕнче вăя кĕрет. «Вĕрентӳ çинчен» саккун проекчĕ обществăра пысăк шăв-шав çĕклерĕ. Ку саккун проектне пысăк улшăнусем кĕртмелли (тен ăна çĕнĕрен çырмалла) куç кĕрет.

Саккунсене халăх валли йышăнаççĕ. Апла пулсан унăн тĕп авторĕ халăх пулмалла та. Çавăн чухне эпир юрăхсăр тата ĕçлемен саккунсем пирки калаçма пăрахăпăр. Паллах хайхи граждансен те активлă пулмалла.

Райадминистрацире

## Хисеп грамотипе наградăланă

Ял хуçалăх производствинче нумай çул хушши тăрăшса ĕçленĕшĕн район администрацийĕн пуçлăхĕн 2011 çулхи февралĕн 7-мĕшĕнчи 78 № йышăнăвĕпе çаксене район администрацийĕн Хисеп грамотипе наградăланă.

– **Борис Алексеевич ИВАНОВА**, «Восток» хуçалăхăн Мулкачкассинчи сĕт-çу фермин вылăх апачĕ хатĕрлекен бригадин рабочине;

– **Вячеслав Владимирович ПУШКИНА**, «Восток» хуçалăхăн тракторист-машинистне;

– **Юрий Иосифович СКВОРЦОВА**, Чапаев ячĕпе хисепленекен хуçалăх механизаторне;

– **Зоя Николаевна ВАСИЛЬЕВĂНА**, «Оринино» хуçалăхăн Патаккассинчи сĕт-çу фермин машинăпа ĕне сăвакан операторне.

Çур акине хатĕрленетпĕр

## Вăрлăх пахалăхĕ пирки

Кун вăрăмланни самай сисĕнме пуçлани çур аки те çывăхра пулни пирки аса илтерсех тăрать. Нарăс уйăхĕн 11-мĕшĕ тĕлне вăрлăх пахалăхне тĕрĕслени çур аки валли паха вăрлăх янтăлассипе ĕçлемелли чылай пулни пирки калать.

Хальлĕхе районти хуçалăхсенче ака кондицине юрăхлă вăрлăх 67 процент кăна. Çав вăхăтрах Суворов яч. хис., «Оринино», «Ударник» хуçалăхсенче кондициллĕ вăрлăх 92 – 83 процент пулни хĕл кунĕсенче пурте алă усса ларманнине çирĕплетет. Çавăн пекех «Восток», Е. Андреев яч. хис., «Герой» хуçалăхсенче те кондициллĕ вăрлăх 78 – 68 процент.

**П. ЗАМЯТИНА, агроном.**

Дополнительные выборы

## Состоялась жеребьевка

10 февраля в Моргаушской территориальной избирательной комиссии состоялась жеребьевка по размещению на безвозмездной основе предвыборных агитационных материалов зарегистрированных кандидатов в депутаты в представительные органы местного самоуправления Моргаушского района и на должность главы Оринкинского сельского поселения в печатном издании «Çĕнтерӳ ялавĕ». С итогами жеребьевки можно ознакомиться на сайте администрации Моргаушского района на банере «Дополнительные выборы в органы местного самоуправления».

Саламлатпăр



Шупуç ялĕнче пурăнакан **Лариса Леонидовна ГЕРАСИМОВĂНА** 55 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм кун-çул сунатпăр. Мĕн шухăшланисене пĕтĕмпех пурнăçланчăр.

**Саламлаканĕсем: амăшĕ, мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕсем, пиччĕшĕпе инкĕшĕ, икĕ йăмăкĕ, шăллĕ, çывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă мăшăра, юратнă аннене, асаннене, йăмăка, аппана, юлташа – Ситуккасси ялĕнче пурăнакан **Любовь Георгиевна МАКСИМОВĂНА** юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр, татах та нумай пурăнма ырлăх-сывлăх сунатпăр. Сана юман пек çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çул, телей, ăнăçу сунатпăр. Сăн-питӳнте яланах йăл кулă çиçтĕр, сĕтелӳ çăкăр-тăвартан ан татăлтăр, кĕрку яланах тăванĕсемпе пуян пултăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, икĕ ывăлĕ, икĕ хĕрĕ, кинĕсемпе кĕрӳшĕ, 4 мăнукĕ, тăванĕсем, кӳршисем.**

# Укçа ал айĕнче ан усрăр

**Суд залĕнчен**

Районти пĕр ялта пурăнакан Боров гражданин малтан та пĕрре мар судпа айăпланнă. Пур пĕр «кукăр алă» тӳрленеймен.

Иртнĕ çулхи ноябрь уйăхĕнче вăл, ниçта та ĕçлеменскер, эрех ĕçес тесех ялти Сидоров пенсионер патне çитет. Ватă çыннăн ĕçе каяс çук. Килĕшет. Юн çăралса каясран юрать тет. Борова шурă эрех илсе килме укçа парса ярать.

Лавккаран ĕçмелли туянса тухнă арçынна шăпах ялти икĕ пĕлĕшĕ Петĕрпе Ваççа кураççĕ. 50 грамм ĕçтеретĕн ĕнтĕ тесе вăйпах хăнана пыраççĕ çаксем. «Пенси старикĕ» патĕнче кĕленчене тăваттăн часах пушатаççĕ.

Ку таранччен ăс-тăн енĕпе аптăраман Боров эрех янă чухне сĕтел çине витнĕ клеенка мăкăрăлса тăнине асăрхать. Ыттисен сĕтел çине пăхма шухăш пулманнине туйсан ăшĕнче хытă савăнать. Унта ăпăр-тапăр выртманнине тӳрех чухласа илет вăл.

Сĕтел хушшинчен тухма ĕлкĕрейменскерсем чӳречен почтальон утнине асăрхаççĕ. Ак тамаша! Вĕсем пухăннă пӳрте кĕрет иккен вăл. Петĕрпе Ваçça тӳрех кăмака хыçне чăмаççĕ. Кил хуçи çывăрнă пек тăвас тесе вырăн çине выртать. Боров çак самантпа усă курса аллине клеенка айне чикет. Çапла, мĕн шутланиех выртать иккен унта. Укçана хăвăрт кĕсьене пытарса чикет те вăл та кăмака хыçнех пырса хĕсĕнсе ларать.

Почтальон пӳрте кĕрсенех кăмака хыçĕнчи Ваççан телефонĕ шăнкăртатса ярать. Эх! вăхăтлă мар. Почтальон пытаннă çынна тухма ыйтать. Боров çухалса каймасть. Судпа айпланнă çын пӳртре пытанма пултарнинчен почтальон ытлашши тĕлĕнмĕ тесе Ваççан телефонне хăйпе пĕрле илсе тухать.

– Намăс та мар-и вара сана ватă çыннăн укçипе эрех ĕçме? – тет почтальон сĕтел çинчи савăтсене асăрхаса.

Чăвашсен «ырă» йăли – пĕр черккепе ĕçесси – пулăшать çаксене. Пӳртре урăх кам та пулин пуласси не кĕтмен хăна шутлама та пултарман, паллах...

Çав каçах Боров Петĕр патне хăнана каять. Унта вăл кăнтăрла пенсионерăнне укçа вăрланине каласа парать. Вăрланă укçапа икĕ арçын каллех эрех илеççĕ, сăра, пирус. Çĕрле вара çаксен эрех пĕтет. Яланах тавçăруллă Боровăн пуçĕ ку хутĕнче те çухалса каймасть: район тăрăх такси сахал çӳрет-и? Пĕрин патне телефонпа шăнкăравласа эрех-сăра, пирус илсе килме ыйтаççĕ. Укçаран ыйту çук, теççĕ. Таксиста вара укçа, паллах, чăрмантармасть. Каланă – тунă. Вăрланă укçа савăнăçлă каç йĕркелеме çитнĕ арçынсене...

Судра Боров ватă çыннăн укçине вăрланине, хăйĕн айăпĕ пуррине хирĕçлемерĕ.

Миравай суд Борова айăплă тесе йышăнчĕ, саккунпа пăхнă айăплава çирĕплетрĕ.

***(Ред.: пичете хатĕрленĕ чухне ятсене улăштарнă.)***

**Т. САЛДЫРКИНА,**
**Муркаш районĕнчи 1 № суд участокĕн миравай судйи.**

**Милици хроникинчен**

## Сумка «çухатакансем» Муркашра татах пулĕç-ши?

Муркашра хĕрарăм сумккисене тимлĕ сыхлакан маньяк тупăннă тейĕн. Нумай пулмасть пĕринне сумка вăрланăччĕ çеç, акă февральти пĕрремĕш вунă кунлăхра кун пек тĕслĕх райцентрта татах пулса иртрĕ.

Ку хутĕнче те сумка вăрлас текенскер ĕçе каçхи сакăр сехет тĕлĕнче пурнăçлама шутланă. Телейлĕ «сунарçă» тĕлне Советская урампа утакан сумкăллă хĕрарăм та вăхăтлă тухнă-çке. Паллах, арçын хĕрарăмран вăйлăрах. Çавăнпа тытăçса илнĕ хыççăн хĕрарăм сумкăсăрах тăрса юлать. Сумкăра вара пĕтĕмпех: унăн паспорчĕ те, перекет кĕнекисем те, укçа илмелли пластик карточка та, телефон та, мăшăрĕн хăш-пĕр документĕсем тата ытти те. Пĕтĕмĕшле тăкак 9 пин тенкĕ ытла кайса ларать.

Сумкăллă арçын тарать, анчах та преступлени вырăнĕнче пĕр перчетке тата куçлăх выртса юлнă. Ку япаласем следствие пулăшĕç, паллах. Уголовлă ĕç пуçарнă ĕнтĕ. Преступленин малалли серийĕ ан пултăрччĕ çеç.

## Малтанхи «çуллă» пурнăçшăн явап тытмалла

Муркашри нумай хваттерлĕ çуртсенче пурăнакансем хăйсен хваттерĕсенче тĕтĕм тухмалли тата вентиляци каналĕсене тĕрĕслесе çӳрекене 400-шер тенкĕ тӳленĕ. Хамăр пурăнакан вырăн хăрушсăрлăхĕ шутлаттарать-çке-ха. Анчах та тĕрĕслевçĕ пухăннă укçапа хăйĕн кĕсйине кăна хулăнлатнă. Çапла вара 2007 çулта вăл ВДПО пĕрлешĕвĕн республикăри хыснине пысăк тăкак кӳнĕ: тĕрĕслев ĕçĕсене пĕр вунă хваттерте кăна irттермен иккен, чылай нумайрах.

Халĕ, ĕçе уçса панă хыççăн, явап тытасси те нумаях кĕттермĕ.

**Пичете районти шалти ĕçсен пайĕн материалĕсем тăрăх хатĕрленĕ.**

**Спорт**

## Кӳршĕсем патĕнче малтисен ретĕнче

Февралĕн 5-мĕшĕнче кӳршĕ Ту çи Çармăс районĕнчи Виловатово салинче Çармăс Республикин уçă ăмăртăвĕ иртрĕ. Унта Муркашри В. Егорова ячĕллĕ спорт шкулĕнче И. Смирнов, В. Киселев тата Н. Степанов тренерсем патĕнче ăсталăха туптакан йĕлтĕрçĕсем те хутшăнчĕç.

Тĕрлĕ ӳсĕмсенче ăмăртнă Алексей Харьков, Светлана Иванова тата Стас Степанов çĕнтерӳçĕсем пулса тăчĕç. Алексей Мясников, Галя Михайлова, Ева Гордеева финиша иккĕмĕш çитме пултарчĕç. Валерий Федоров, Оля Андреева тата Анжела Никитина виççĕмĕш вырăна тухрĕç.

Районта çитес кунсенче иртекен йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕсенче те çамрăк спортсменсене ăнăçу сунатпăр.

**Хамăр инф.**

реклама

**СЛУХОВЫЕ цифровые АППАРАТЫ**

**5 000 - 12 000 р.** (комплектующие в ПОДАРОК).
**за старый слуховой - получи СКИДКУ до 500 руб.!**

**ОЧКИ Панкова (тнп) для УЛУЧШЕНИЯ ЗРЕНИЯ**

глаукома на ранней стадии, начальная катаракта, косоглазие, близорукость, дальнозоркость.

**ОЧКИ - 5500 р. - СКИДКА 1000 р.** **Бальзам Панкова - 300 р. в ПОДАРОК!**

Имеются противопоказания, перед применением ознакомьтесь с инструкцией

**продукция для здоровья**

**ЖИВИЦА -** бронхит, воспаление почек, артрит, ОРЗ, грипп, ЖКТ, аденома простаты, дерматит, нормализует давление и т.д.

**ОГНЕВКА -** легочные, сердечно-сосудистые заболевания, снижает уровень сахара в крови, и т.д. **При покупке 3 упаковок ИММУНО или КАРДИО в ПОДАРОК**

**18 февраля с 13 до 14 час. в Доме культуры**

ОГРН 305184129000010

тел. (3412) 51-03-68

**Вулакан пултарулăхĕ**

## Сашукпа Ванюк

Сашук вылять урамра,
Ванюк ĕçлет пахчара.
Сашук перет мечĕкпе,
Ванюк пиçет ĕçĕпе.

## Чăмсĕр кушак

Эпĕ ыйтрăм кушакран:
– Ӳссен эсĕ кам пулан?
Кушак ним те шарламасть,
Пĕр сăмах та каламасть.

**Кристина КРАСНОВА.**
Ярапайкассинчи вăтам шкул.



# МегаФон: Интернет у вас в кармане

Какая погода завтра утром? Как наши сыграли? Что во вчерашней серии было? На эти и множество других вопросов у многих есть готовый ответ: «Посмотри в Интернете».

К хорошему привыкаешь быстро, поэтому без доступа к Сети мы сегодня чувствуем себя не в своей тарелке. В дороге, в гостях, в деревне или поселке, где Интернет «медленный» или его нет вообще, мы испытываем дискомфорт.

«МегаФон» позаботился о том, чтобы мы всюду чувствовали себя как дома. Теперь выйти в Сеть стало еще легче: если под рукой нет компьютера или ноутбука, просто включите телефон.

достаточно подключить тарифную опцию **«Интернет-регион»** – и любой абонент «МегаФона» получает доступ во Всемирную паутину со своего мобильного. Общение по аське и на любимом сайте, проверка почты, просмотр фотографий – все это доступно на высоких скоростях и по очень низким ценам!

В Чебоксарах, Новочебоксарске, Канаше, Кугесях и Лапсарах благодаря «Интернет-региону» вы скачиваете **1 Мб всего за 10 копеек**!

По всей остальной республике вы пользуетесь **безлимитным Интернетом**, то есть трафик предоставляется бесплатно.

Качественная связь от «МегаФона» есть практически в любом уголке Чувашии, а значит, мобильный Интернет вас не подведет. «Турбо-Интернет» от МегаФона сэкономит время и расширит ваши возможности: высокая скорость доступа позволит за полчаса скачать новый альбом любимой группы, в считанные секунды выложить снимки на своей страничке в «Одноклассниках», пообщаться на форумах.

Подключить «Интернет-регион» всего за 10 рублей можно любым удобным способом:

- с помощью прямого запроса: *105*673# или *105*673*1#
- в офисах продаж и обслуживания «МегаФона»
- в информационно-справочной службе компании



- отправив SMS-сообщение на номер 000673.

А если вы воспользуетесь системой самообслуживания **«Сервис-Гид»**, подключение будет для вас бесплатным.

Современная связь – это турбоскорость и независимость от проводов. Подарите себе свободу общения по всей республике!

Подробнее в точках продаж и на сайте : www.megafon.ru

**Ювелирная мастерская: ремонт и изготовление ювелирных изделий, лазерная гравировка изделий, скупка лома и старинных монет. Адрес: с. Моргауши, Дом быта. Тел.: 8-927-66-88-501. 2-5.**

**СПУТНИК. АНТЕННА «ТРИКОЛОР»**
**6800 руб. – без установки.**
**7800 руб. – с установкой.**
**Кредит – не дорого.**
**Тел.: 8-906-385-29-30.**

**БЕТОН, РАСТВОР любых марок**
**Тел.: 38-87-78, 8-927-66-88-778.**
**Песок, ОПГС (гравмасса), щебень**
**Тел.: 38-84-40, 8-927-66-88-440.**
**Доставка миксерами, самосвалами. 4-50.**

В Москву и Московскую обл. требуются: фасовщицы-упаковщицы, грузчики (кондитерские фабрики, молочное производство, снековая продукция, мясокомбинаты, склады). Питание, проживание предоставляются. Вахта. З/п от 20000 руб. (сдельная). Тел.: 8(8352)23-22-22. 2-5.

**Прогноз погоды с 12 по 18 февраля 2011 года** www.yandex.ru

| сб 12 | вс 13 | пн 14 | вт 15 | ср 16 | чт 17 | пт 18 |
|---|---|---|---|---|---|---|
| облачно | облачно | облачно, небольшой снег | облачно | облачно | облачно с прояснениями | облачно |
| –18 | –15 | –12 | –15 | –18 | –19 | –19 |
| –18 | –15 | –17 | –19 | –24 | –24 | –24 |

**Пĕлтерӳсем. Объявления**

**Спутниковые антенны «ТРИКОЛОР». Установка, гарантия. 6800 руб. Тел.: 8-905-345-77-19. 1-5.**

**Проекты домов, электро- и газоснабжения, сметы. Свид. СРО. ООО «Инттехс». с. Моргауши, ул. Мира, 9А. Тел.: 62-6-03. 3-5.**

* * *

**Продаю: кирпич одинарный М-100; М-125; М-150; керамический полуторный М-125; двойной керамический; силикатный белый, желтый; КББ р-р 20х20х40; красный половняк, некондиция, гравмассу, керамзит. Доставка и разгрузка на манипуляторе. Документы. Тел.: 8-903-358-20-97, 8(8352) 44-20-97. 5-7.**

* * *

**Декор – мебель изготавливает любую корпусную мебель (кухни, прихожие, мини-стенки, детские, компьютерные столы) по размерам заказчика. Замер и доставка бесплатно. Гарантия качества. Предлагает услуги: установка дверей, укладка линолеума и ламинированных полов, устройство потолков, обшивка стен, устройство крыш и мансард, устройство сайдингом. Наш адрес: 429530, с. Моргауши, ул. 50 лет Октября, д. 3. Тел.: 62-6-60, 8-905-343-08-10. 4-5.**

* * *

**Куплю корову, бычка, телку. Тел.: 8-905-342-39-43. 2-5.**

* * *

**Продаем: доски 25-50 мм (обрезные, необрезные), брус любого сечения, жерди, подтоварник. Изготовим на заказ: срубы, беседки любого размера. Цена договорная, доставка по району бесплатно. Тел.: 8-927-667-28-32, 8-919-656-13-84. 9-10.**

* * *

**ЛЕЧЕНИЕ АЛКОГОЛИЗМА**

**(г. Чебоксары, пр. Ленина, 32А, тел.: (8352)55-16-60, 8-902-327-08-17). Лиц. № ФС21-000353 от 05.03.2010 г. Требуется консультация врача. 4-5.**

* * *

**Услуги буровой машины для рытья и углубления колодцев разного диаметра. Тел.: 8-903-379-09-01. 5-5.**

* * *

**НО «ФОНД «ВОЗРОЖДЕНИЕ ХРАМОВ» ПРЕДЛАГАЕТ: касса взаимопомощи (выделение беспроцентной ссуды на неотложные нужды, внесшим благотворительный взнос от 1000 рублей), бесплатная юридическая и благотворительная помощь. Адрес: с. Моргауши, ул. Гагарина, д. 2. Тел.: 8-905-342-11-50. 3-7.**

* * *

**Продаю керамзитобетонные блоки, песок речной, гравмассу. Адрес: «Моргаушагропромснаб». Тел.: 8-905-340-07-78. 3-5.**

* * *

**Закупаем молочных телят. Тел.: 8-905-341-69-25. 2-2.**

* * *

**Продаем доски обрезные, необрезные; брус: 200х200, 150х150, 150х100, 100х100. Изготовим срубы рубленые, оцилиндрованные. Тел.: 8-919-679-18-11. 2-5.**

* * *

**Бурение, добуривание колодцев. Кольца имеются. Тел.: 8-965-685-89-75. 2-5.**

* * *

**Продаю новую однокомнатную квартиру общей площадью 45 кв. м. в с. Б. Сундырь по ул. Новая, с индивидуальным отоплением, 2 этаж двухэтажного дома. Тел.: 8(8352)459-059. 2-2.**

* * *

**Сурăх путеккисене тата сысна çурисене сутатпăр. Тел.: 8-927-859-03-69.**

* * *

**Халăхран хаклă хакпа ашпа тата чĕрĕ виçепе вăкăрсем, тынасем илетпĕр. Тел.: 8-903-066-64-61.**

**Муркаш районĕнчи «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат**

**УЧРЕДИТЕЛЬСЕМ:**
Чăваш Республикин Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерстви.
ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕн министерствин «Муркаш районĕн «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçат редакцийĕ» автономи учрежденийĕ.

**Тĕп редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чăваш Республики, Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 9А çурт.
ТЕЛЕФОНСЕМ: тĕп редактор - 62-1-36, яваплă секретарь - 62-2-82, бухгалтери - 62-1-35,
пайсем: общество пурнăç пайĕ - 62-2-82, экономика тата социаллă пурнăç пайĕ - 62-1-38.
Факс: 62-1-36; E-mail: morpress@cbx.ru, redaction@cbx.ru

Сыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникаци сферине пăхса тăракан Федераллă службăн Чăваш Республикипе – Чăваш Енпе ĕçлекен управленийĕ 2009 çулхи раштавăн 7-мĕшĕнче ПИ ТУ 21-00073 № регистрациленĕ.

Калăпăшĕ 1,5 пичет листи.
Ал çырăвĕсене рецензилемеççĕ, каялла тавăрса памаççĕ, 2 страницăран пысăкраххисене йышăнмаççĕ.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.

ИЗДАНИ ИНДЕКСĔ: 54822.
Хаçат чăвашла юн тата шăмат кунсерен тухать.
Номер дежурнăйĕ Шапошников В.Л.
Пичете панă 11.02.2011 ç.
Пичете памалли вăхăт: графикпа – 17 сех. 20 мин, чăннипе – 17 сех. 20 мин.
Заказ Тираж 4305.

Номер набран и сверстан в АУ ЧР «Редакция Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ», отпечатан в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.